**Эсĕ пĕрре, юратнă тăван çыннăм**

# Амăшĕпе хĕрĕ



Эпĕ пырса кĕнĕ чух тивĕçлĕ канури Валентина Александровна Петрова тăрăшсах выльăх-чĕрлĕх пуçтаратчĕ. «Кунĕ кĕске – час тĕттĕмленет. Кун çутипе усă курса ĕнисене те апат парса хупмалла, тынасене те ай сарăм хурса памалла. Каç сĕмĕ хупличчен пурнăçламалли ытти ĕçсем те çук марха. Ĕлкĕрес пулать. Çапла ĕнтĕ ял хĕрарăмĕн пурнăçĕ. Юрать-ха хĕрĕм Оля пулăшать. Халĕ вăл яшка лартса ячĕ-ха», – пӳрт умнелле сĕт витри йăтса утнă май калаçрĕ кил хуçи хĕрарăмĕ мана малалла иртме сĕнсе.

Кашмашра пурăнакан Валентина Александровнапа Иван Петрович Петровсем – ялти тăрăшуллă çынсем. Хăйсем ĕçе юратнине кура ачисене те (ывăлпа 3 хĕр) ĕçе хăнăхтарса çитĕнтернĕ. Кĕçĕннисĕр – Лена – пуçне пурте çемьеллĕ ĕнтĕ, кашниех пурнăçра хăйĕн вырăнне тупнă.

Пурнăç çулĕпе ашшĕ-амăшĕн сăмахĕсенчен иртмесĕр, Валя хĕр чухнех пĕлӳ çулĕ çине тăнă: Шупашкарти çыхăну техникумĕн малтанхи студенчĕсенчен пĕри вăл.

– Аттен тăванĕсем почтăра ĕçлетчĕç те çыхăну маншăн ют пулман. Анчах кунта пурнăçламалли те чылайăи мана çак енпе вĕренме хистерĕ, – каласа парать Валентина Александровна.

– Инçетри Шăмăршăран Муркаш районне епле çаклантăр-ха? Направленипе ячĕç-и? – тĕпчетĕп калаçăва малалла тăсма çул шыраса.

– 1973 çулта алла диплом илтĕм те мана направленипе Шăмăршăнах ячĕç. Анчах Шупашкарта вĕреннĕ чух паллашнă каччă çартан таврăнчĕ те мана Кашмаша илсе килчĕ, – ăшă кулăпа пăхса илчĕ Валентина Александровна юлашки çулсенче чирпе аптăракан мăшăрĕ çине. – 1974 çулта пĕрлешрĕмĕр, хам специальноçпе – техник-электромеханик – 33 çул Муркашри линипе техника цехĕнче вăй хутăм. Çак тапхăрти районти телефон çыхăнăвĕн аталанăвĕ йăлтах куç умĕнче.

Паян амăшĕн ĕç династине кĕçĕн хĕрĕ Лена малалла тăсма хатĕрленет. Вăл паян çыхăну техникумĕнче куçăмсăр майпа вĕренет. Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре Валентина Александровнана Ольга Крылова хĕрĕпе куратăр. Оля та паян амăшĕ. Вĕсем мăшăрĕпе Сергейпа Валерия хĕрне ӳстереççĕ. Санкт-Петербургри инженерипе экономика университечĕн Шупашкарти филиалĕнчен вĕренсе тухнă Оля паян районти тĕп больницăн бухгалтерĕ.

– Тавах çĕршыв ертӳçисене Амăшĕсен кунне туса панăшăн. Ку вăл Тăван çĕршыв уявĕ те, мĕншĕн тесен эпир çĕршыва анне тесе чыслатпăр, анне сăмахпа çĕр çинчи чи ырă пулăмсене танлаштаратпăр, аннере хамăрăн малашлăха пăхса çĕнĕ тĕллевсемпе ӳсĕмсем куратпăр, – терĕç чей ĕçсе ларнă хушăри калаçăва вĕçлесе амăшĕпе хĕрĕ, кукамăшĕпе амăшĕ.

**А. ПЕТРОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Ача амăш-героиня**

# Ĕçрен пăрăнман, ачаран ютшăнман

Турай ял тăрăхĕнче тĕрлĕ çулсенче ача амăш-героиня ята илнисем 5 хĕрарăм. Виççĕшĕ Суворов яч. хис. хуçалăх территорийĕнчен, иккĕшĕ – Уйкас Турайран. Паян вĕсенчен 3-шĕ пурăнаççĕ: Кĕçĕн Чурашри Евгения Гавриловна Евтихеева, Анаткассинчи Екатерина Васильевна Федорова, Тушкассинчи Екатерина Федоровна Яковлева. Вĕсен кашнийĕнех вуншар ача. Çавăнпа хăйсем социаллă пурнăç аталанăвне хывнă тӳпипе ял çыннисемшĕн, уйрăмах çамрăксемшĕн, ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Ача амăш-героиня ята совет тапхăрĕнче 10 е ытларах ача çуратса ӳстернисене панă. Мĕнле пурăнаççĕ-ха паян çав ята тивĕçнисем? Çак ыйту çине хурав шыраса иртнĕ кунсенче Турай ял тăрăхĕнчи Кĕçĕн Чураш ялĕнчи Евгения Гавриловна Евтихеева патĕнче пултăм.



Сăпайлăхĕсĕр пуçне урăх нимĕнпе те ыттисенчен уйрăлман кинемее килте кӳршĕ хĕрарăмĕпе пĕрле тĕл пултăм.

– Пурăнатпăр-ха, ыранхи куна пăхса кун кунлатпăр. Алăсем тытайманнипе ĕне сăваймастăп пулсан та, кил таврашĕнчи ĕçсенчен тĕппипех пăрăнмастăп. Юрать ачасемпе мăнуксем хавхалантарса, пулăшса тăраççĕ. Вĕсем пурнăçра тӳрĕ çултан пăрăнманнишĕн савăнатăп, кашнин ăнăçăвĕшĕнех хĕпĕртетĕп, – кĕтсе илчĕ пире Евгения Гавриловна.

Хăйне шаннă ĕçе мала хума хăнăхнă хĕрарăм хăйĕн ăнăçăвĕсемпе пурнăç утăмĕсем пирки каласа пама васкамасть. «Çынсенчен кая юлман, пит иртсех те кайман», – çапла пулчĕ унăн хуравĕ пурнăç историйĕпе паллаштарма ыйтсан. Çапах сăмах ваклана май кинемейăн Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри ĕç кунĕсем те, хĕр пуççăнах вăрман касма çӳренисем те чĕлхе çине килчĕç.

– Ĕçрен хăраман çав, качча кайсан ача çуратассинчен те пăрăнман. Ытарлă каласан, çăмăл çул-йĕр шыраман. Хамăн пурнăçра ăшă шыв ĕçсе курман, сивве тиркемен, эмел-тавраш палламан. Турăран ыйтмесĕр пурăнса мăшăрăмпа 6 салтак ӳстертĕмĕр, 4 хĕре пурнăç çулĕ çине кăлартăмăр. Шел, мăшăрăм пурнăçран уйрăлчĕ, – куçне шăлса илсе калаçать Евгения Гавриловна.

Анаткас ялĕнче 5 ачаллă çемьере çуралса ӳснĕскерĕн пĕтĕм пурнăçĕ Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх производствипе çыхăннă. Колхозшăнах вăрман каснă, торф кăларнă, çурлапа тырă вырнă, ял халăхĕпе карталанса утă çулнă.

– Витĕр çил вĕрекен сарайсенче ĕне сунисем, стенари шăтăк-çурăксене картласа сысна пăхнисем епле асран кайччăр ĕнтĕ. Эпир курнине пирĕн ачасем курманнишĕн тав Турра. Мăнуксен вара татах ырăрах пурнăçпа пурăнмалла пултăрччĕ, – малашлăхри ырă лăха шанса калаçать кинемей.

1957 çулта качча кайнăскер, ача çуратассинчен пăрăнса çылăха кĕмесĕр 6 ывăлпа 4 хĕре пурнăç панă. Паян вăл кĕçĕн ывăлĕпе – Виталийпе – пурăнать. Кил-çурт тĕрек пулни Евтихеевсем ĕçчен пулнине çирĕплетет кăна.

– Вăрçрăм та пуль, ватрăм та пуль – каçарччăр кăна, – сăпайлă калаçать нумай ача амăшĕ. – Паянхи ырă пурнăçра пурăнакансем эрехпе айкашнине, çăвартан пирус кăлармасăр ĕç тĕлне пĕлмесĕр çӳренине курсан чун тарăхать. Анчах мĕн тăвас – вĕсен те хăйсен ашшĕ-амăшĕ пур, – тет Е. Евтихеева пурнăçра хăй ыррине çеç шыранине палăртса.

Уявсенче Евгения Гавриловна Евтихеева ача амăш-героиньăн килĕнче утма та вырăн çук. 10 ачи, вĕсен мăшăрĕсем, 22 мăнукĕпе вĕсен мăшăрĕсем тата 2 прамăнукĕ пӳрте лăках тултарса лартаççĕ. Пӳрт пушă мар пулсан, çын ахаль пурăнман. Ку вара – телей!

**А. БЕЛОВ.**

# Йышпа пурăнма çăмăлрах

Çĕр çинче аннерен хакли çук. Çакна эпир хамăр пурнăçăн пĕрремĕш кунĕнченех ăнланса илетпĕр. Хыççăн вара ку юратăва кам пурнăç тăршшĕпех хăйĕнчен пĕр утăм хăвармасăр илсе пырать, кам... Аннесен кунĕ умĕн эпир паян ырă тĕслĕхсем çинче çеç чарăнса тăрăпăр.

Сыпайра çуралса ӳснĕ тата халĕ те кунтах пурăнакан Надежда Николаевнапа Геннадий Игнатьевич Яковлевсем – паянхи нумай çамрăксемшĕн тăрăшуллă хăйне евĕр ырă çемье.

– Йыша хăнăхнă эпир, çавăнпа та йышпа пурăнма çăмăлрах, йывăрлăхсене çĕнме те меллĕрех, – терĕç пĕр сăмахлăн Надеждăпа Геннадий.

5 ачаллă çемьере (3 хĕрпе 2 ывăл) асли Надежда шăллĕсемпе йăмăкĕсемшĕн тĕслĕх пулассине самантлăха та кун йĕркинчен кăларман. Хуçалăхри чылай ĕçе хăй çине илнĕ, ашшĕ-амăшне ачисене пăхса çитĕнтерме пулăшнă.

– Пулăшу вăл пĕчĕк ачаран пулсан та пулăшăвах. Тата хăв çуратнă тĕпренчĕкӳ сана пулăшса пĕрремĕш утăм тăвать пулсан, амăшĕн савăнăçпа тулнă чунĕ пĕлĕт çине хăпарать тейĕн. Ку туйăма сăмахпа калаймăн, ăна туйса курмалла, – терĕ 1995 çулта Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă Надежда Николаевна. Паян вăл Сыпайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет.

Гена та нумай ачаллă (8 ача) çемьере ӳснĕ. Хăй кĕçĕнни пулнăран аслисен пулăшăвне пĕрре мар курнă.

– Çав пулăшăва манăн ачасен мĕншĕн курмалла мар? Çак ыйтăва хуравласа 4 ача çуратрăмăр та ĕнтĕ, – çемйипе кăмăллăн пулса калаçать Геннадий Игнатьевич. Унччен Сыпайри сысна фермин заведующийĕнче вăй хунă арçын паян «РФ Финанс министерствин ведомство хуралĕ» патшалăх учреждениййĕнче ĕçлет.

1992 çулта пĕрлешсе çемье çавăрнăскерсем 4 ача çуратса ӳстернĕ. Асли – Катя – культура училищин студентки. Иккĕмĕшĕ – Аня – Шупашкарти лицейра 9-мĕш класра вĕренет. Люда Сыпайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулăн 5-мĕш класне çеç çӳрет пулсан, кĕçĕнни – Федор – ялти «Буратино» садик воспитанникĕ.



Çапла вăл нумай ачаллă çемьере: аслисем çунат сарса пурнăç çулĕ çине тухнă пулсан та, килте ача сасси çухалмасть. Теллей мар-и çакă? Хирĕçле хурав çук. Кăçал район администрацийĕ вĕсене панă Тав çырăвĕ те çакна çирĕплетет.

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Прокуратурăран**

# Эмел хакĕсем пирки

Район администрацийĕн экономика пайĕн специалисчĕсемпе пĕрле нумаях пулмасть эмел реализацилекенсем хаксем тăвас сферăри саккунлăха пăхăннине тĕрĕслерĕмĕр.

РФ Правительствин 762-мĕш номерлĕ постановленийĕпе Правительство çирĕплетнĕ пурнăçшăн пĕлтерĕшлĕ эмелсен переченне кĕнĕ эмелсен хакĕсене патшалăх йĕркелесе пырать. ЧР Министрсен Кабинечĕн 2009 çулхи çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 210-мĕш номерлĕ постановленийĕпе эмел туса кăларакансен хакне сутуçă 30 процента çити, ют çĕршывран тӳрремĕн килекен эмелсен хакне 20 процент таран хăпартма пултарать.

Тĕрĕслев вăхăтĕнче район территорийĕнчи аптекăсем таварсен хакне 20 процентран ытла ӳстерменни, çакă ЧР Министрсен Кабинечĕн постановленийĕпе килĕшсе тăни курăнчĕ.

Тĕрĕслевре вируслă чир-чĕрпе кĕрешмелли тата унран асăрханмалли препаратсен хакĕсене искусствăлла майпа хăпартни палăрмарĕ.

**Е. КУЗЬМИНА, район прокурорĕн пулăшаканĕ.**

**Ĕнер Раççейри тинĕс пехотин кунĕ пулчĕ**

# Çарти служба асран тухмасть

Çемьере арçын ача çуралсен, ăна утьăкка сиктернĕ чух кашниех ачана сывлăх сунса салтак пулма сĕнет. Салтак вăл – мирлĕ пурнăç хӳтĕлевçи, малашлăх ĕмĕтсен шанчăкĕ. Москакассинчи Пушкинсен те кунашкал савăнăç хăй вăхăтĕнче виççĕ пулнă: Михаил, Николай тата Владислав çуралсан.

1977 çулхи çу уйăхĕн 6-мĕшĕнче унччен ял хуçалăх институтĕнчен агронома вĕренсе тухнă Михаила хăйĕнчен 5 çул кĕçĕнрех Владиславпа пĕрле çара илеççĕ.

– Канашран Владивостока 44 чăваш ачи кайрăмăр. Вырăна çитсен суйлама пуçларĕç те иксĕмĕре те тинĕс пехотине илчĕç. Пĕлмен эпир ун чух тинĕс пехоти мĕн иккенне. Хура формăллă патвар салтаксене курсан малтанах хăрани паян та асра. Анчах шкул çулĕсенчех спортпа туслă пулнăскерсем хамăра çирĕп тытрăмăр. Çапла вара çĕршыври тинĕс пехотин пĕртен-пĕр дивизийĕн матросĕсем пулса тăтăмăр, – аса илӳ çăмхине кăмăллăн сӳтсе калаçаççĕ пиччĕшĕпе шăллĕ.



Салтак вутра пиçĕхсен, шывра çăвăнсан, çил çинче кушăхсан, шартлама сивĕре уçăлсан кăна çĕршывăн паттăр хӳтĕлевçи пулса тăрать тени пĕлтерĕшне çухатман. Çакна Пушкинсем службăн пĕрремĕш кунĕнчех туйса илеççĕ. Акă епле çырать Миша служба пуçламăшĕ пирки: «Чаçе çитсенех пурнăç урăхла пуçланчĕ. Славкăпа пĕрлех эпир. Ирхине тăрсан – зарядка. Чупасса вара нумай чупатпăр. Çамрăксемпе танлашма йывăртарах маншăн, анчах чăтас пулать. Акă вăл тинĕс пехоти! Темĕн те вĕрентеççĕ кунта, пурте вăхăтпа. Кашни çеккунтрах мĕне те пулсан хатĕр пулмалла...». «...Мишăна рота старшинине лартрĕç. эпĕ унăн ротинче, – пĕлтерет Слава килтисене. – Пирĕн кравацьсем çума-çумăнах...»

– Виçĕ уйăх пулнă-ши казармăра, пĕлместпĕр. Ытти йăлтах вĕренӳре: десант корабелĕ çинче, вертолетпа е самолетпа заданисене кайса янă сопкăсем çинче т. ыт. те. Анчах хамăр тинĕс пехотине службăна лекнишĕн эпир паян та савăнатпăр, – терĕç паян Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче ĕçлекен Михаил Михайловичпа «Моргаушимежрайгаз» предприятире мастер пулса ĕçлекен Владислав Михайлович Пушкинсем.

Кăшт каярах пулсан та, уяв ячĕпе Сире!

**Анатолий ПЕТРОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: тинĕс пехотин матросĕсем Пушкинсем.**

**Официально**

**Чувашская Республика**
**Моргаушское районное Собрание депутатов**
**РЕШЕНИЕ**
**27.11.2009 г. № С-36/5**

село Моргауши

**О внесении изменений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 25.10.07 г. N С-21/6 «Об утверждении Положения «О вопросах налогового регулирования в Моргаушском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации и Чувашской Республики о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления»**

В соответствии с Налоговым кодексом Российской Федерации, Федеральным законом от 06 октября 2003 г. N 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», Законом Чувашской Республики от 23 июля 2001 г. N 38 «О вопросах налогового регулирования в Чувашской Республике, отнесенных законодательством Российской Федерации о налогах и сборах к ведению субъектов Российской Федерации» в целях регулирования налоговых правоотношений, Моргаушское районное Собрание депутатов решило:

Статья 1.В приложениях №№ 2,3,6,7,10 слова «на участке автомобильной дороги «Нижний Новгород –Уфа» (автодорога «Волга» М-7)» заменить на «на придорожных полосах автомобильной дороги М-7 «Волга».

Статья 2. Настоящее решение вступает в силу по истечении одного месяца со дня его официального опубликования и распространяется на правоотношения, возникшие с 01 января 2010 года.

**Глава Моргаушского района Ю.А. ИВАНОВ.**